Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

Автор: **Сарби (Бородкина-Яковлева) Раиса Васильевна**

Книга: **Хĕвел мулкачĕсем**

Стих**:** **Жираф**

Жираф утса çӳрет мăнаçлă,
Чăмлать вăл çулçă ирлĕ-каçлă
Вăл халь чи модăллă чĕрчун –
Вегетарианец! Ырă чун!

Вăл тăнăç кăмăллă, хавиллă,
Хăватлă та ачаш, хавaслă –
Тытса çурмасть никам хăмне
Тăрантарасшăн хырăмне.

Илемлĕ, вăрăм мăйлăскер,
Хеветлĕ, çутă ăслăскер
Лаша, ĕне, слон евĕрех
Вăл халăхшăн ĕçлесшĕнех...

Унпа тăвасчĕ килĕшӳ –
Пулатчĕ ырă илĕшӳ.
Унпа хитрен калаçмалла,
Вара иленĕ вăл алла.

Ăна ăс памалла кăштах,
Ĕçе вăл пуçăнĕ вăштах.
Эп жирафа вĕрентĕп хам –
Унпа пĕрле ĕçе тухам!

Жираф – чăн пулăшуçă пулĕ–
Çынсем патне выртать ун çулĕ.
Пуçтарĕ çимĕç – ананас –
Хăнале манпала сана.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.